Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе

Тимлĕх кирлĕ

– Кăçалхи çур çул хушшинче çул çитменнисем пирĕн районта 21 преступлени турĕç, – çак цифрăран пуçларĕ калаçава шалти ĕçсен пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен инспекцийĕн аслă инспекторĕ Л. Плечова. – Ку самаях пăшăрхантарать. Пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан, преступленисен шучĕ икĕ хут ӳсрĕ. Вĕсене тума хутшăннă çул çитменнисен хисепĕ те 13-рен 16-на çитрĕ. Пирĕн пĕтĕмлетӳсене пăхсан, 16-17 çулхисем пурĕ 11-ĕн йĕркене пăсса хăйсен пурнăç çулне тĕрĕс мар утăмран пуçлани аван курăнать.

Кăçалхи çул уйрăмах ушкăнпа тунă преступленисем нумай пулнине пĕлтерчĕ аслă инспектор. Çакă вăл ачасем хăйсене мĕн çитменни çинчен ашшĕ-амăшне мар, ăнсăртран тупăннă юлташĕсене каласа панипе çыхăнман-и-ха? Килте пур енлĕн тимлĕх çитменнипех урамра усал алăсене çакланма пулать. Акă тунă преступленисенчен 8-шĕ кĕсье телефонĕсене вăрланипе çыхăннă. Çак телефонсем кашнийĕнех пур темелле ĕнтĕ. Анчах та çын аллинчи «чăнкăрах» телефонсем куçа илĕртеççĕ курăнать. Кĕсье телефонĕ каласмалли япала кăна пулнă пулсан, тен, ку тĕлĕшпе преступленисем те сахалрах пулĕччĕç. Паян вара вăл пĕчĕк компьютерпа танах. Çавăнпа та çакăн йышши преступленисене тăваканĕсем те чылайăшĕ шкул ачисем.

Вĕсем «тăрăшнипех» тĕрлĕ транспортăн саппас пайĕсем те çухалаççĕ. Апла пулсан тепĕр чух «манăн ача шкулах кайрĕ-ши» тесе те шутламалла хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕн. Унсăрăн ача йĕркене пăснăшăн çырнă административлă протокол тăрăх штраф тӳлемелле пулса тухать. Сăмах май, палăртнă тапхăрта 16 çул тултарман 14 çамрăка ӳсĕрле! тытса чарнă. Пĕлтĕрхинчен каллех икĕ хут нумайрах. Пурнăç малалла та çапла кайсан мĕн патне çитсе тухăпăр-ши? Нивушлĕ çак ыйту ашшĕ-амăшĕсене пĕрре те шухăша ямасть? Вĕсен сăмахĕсем хăйсен ачисемшĕн витĕмлĕ пулмалла-çке.

Акă халĕ обществăлла воспитательсем те пур. Вĕсем вара çул çитменнисене çеç мар, тепĕр чух çемьесене те кирлĕ пек туйăнать. Йĕркене пăсакан ачасенчен ытларахăшĕ тулли мар, сахал тупăшлă тата йывăр лару-тăруллă çемьесенчен. Çакнашкал 12 çемье районти çул çитменнисемпе ĕçлекен комиссире учетра тăрать. Çул çитменнисем вара 55-ĕн.

Шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем çемьесенче час-часах рейдсемпе пулаççĕ. Акă кăçал та 38 хутчен тăрĕслевсем ирттерсе 17 ачана Муркашри тĕп больницăри ятарлă реабилитаци палатине вăхăтлăх вырнаçтарнă. Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаннипе тума тивет çак утăма. Уголовнăй кодексри 156 статья та кунашкал ашшĕ-амăшĕ валли хальлĕхе 4 хутчен «кирлĕ пулса тухнă». Ашшĕ-амăш прависенчен хăтарассипе те 5 материал хатĕрленĕ çак хушăра, вĕсенчен 3-шĕпе вара правасенчен хăтарма йышăннă. Хăйсен айăпĕпе ашшĕ-амăшĕсем хăйсенчен чи çывăх çыннисене уйăрмалла туса хураççĕ. Кун пек пуянлăхĕ те урăх çук вĕт-ха. Çук, ăнланмаççĕ иккен.

Каçхи, çĕрлехи вăхăтра, уйрăмах çулла, ялсенче çамрăксен сасси тул çутăличченех илтĕнме пăрахмасть. Вĕсене те тĕрĕслемелле милици ĕçченĕсен. Ташă каçĕсенче вара ку рейдсене хăнăхнă тейĕн. Ӳсĕррисем тарса пытанма та вĕренсе çитнĕ. Милици машини кайсан вара вĕсем темĕнле пархатарлă ĕç тунă пек унтан-куртан тухаççĕ.

Сывă та çамрăк организмĕпе туллин пурăнса та курăмаççĕ-çке урама парăннă çамрăксем. Килте çирĕпрех пулни кирлĕ пулĕ. Чи çывăх юлташ вырăнĕнче ашшĕпе амăшĕ пулни. Шел, ачана ĕçлеттересси те халĕ хыçалти вырăнах юлма пуçларĕ.

Çитменнине аслисем те çул çитменнисен аллипе «кăвар туртаççĕ». Малтан эрехсăрине пĕрле ĕçеççĕ. Кайран, тăн-пуç пăтранса кайсан, «ĕçне» те пĕрлех тăваççĕ. Аслисемпе пĕрле эрех ĕçнине те ку тапхăрта 10 тĕслĕх таранах тупса палăртнă. Çапла вара – тепĕр 4 преступлени. Апла аслисен те хăйсен айăпне йышăнмала. Магазин çаратни те, машинăн саппас пайĕсене вăрлани те – çапла майпа июль уйăхĕнче тунă преступленисем. Йĕркене пăсасси чакмасть. Анчах та милици сотрудникĕсем çеç çине тăнипе инçех каяймăпăр пулĕ. Çемьесенче тимлĕх ытларах кирлĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Сывлăх

Сывлăх малти вырăнта пултăр

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Диспансеризаци тĕрĕслевне кĕске вăхăтра тусан аванрах. Енчен те çын больницăна тунти кун килчĕ пулсан, унăн кĕçнерни кун тĕрĕслеве вĕçлесен питĕ лайăх. Мĕншĕн тесен кашни эрне вĕçĕнчех Муркашри тĕп больница специалисчĕсем Сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министерствине диспансеризаци витĕр тухнă кашни çын çинчен пĕлтерсе тăраççĕ.

Диспансеризаци тĕрĕслевĕсĕр пуçне больницăра медицина тĕрĕслевне тарăннăн тума та май пур. Е.Н. Семенова терапевт-профпатолог каланă тăрăх, кăçал 124 çын çак тĕрĕслев (УМО) витĕр тухнă та ĕнтĕ. Вĕсем хушшинче «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн ĕçченĕсем 78 çын, Пенси фончĕн районти уйрăмĕнче ĕçлекенсем 26 çын, «Ударник» сăнавпа производство хуçалăхĕнче вăй хуракансем 25-ĕн тата «Дорисс-Нефтепродукт» пĕрлешĕвĕн 5 специалисчĕ.

Мĕнпе уйрăлса тăрать-ха çак тĕрĕслев пурте хăнăхнă медосмотртан? Пĕрремĕшĕ – хушма тепĕр икĕ специалист тĕрĕсленипе. Ку ĕç спецификипе çыхăннă. Тепĕр уйрăмлăх – хушма лаборатори тата инструменталлă тĕрĕслевсем пурри. Ĕç вырăнĕ епле пулнине кура çак тĕрĕслевсем е кашни çул, е икĕ çулта пĕрре пулма пултараççĕ.

Медицина тĕрĕслевне тарăннăн тухас пулсан, предприятирен çулталăк пуçламăшĕнчех социаллă страховани фондне çырупа тухмалла. Мĕншĕн тесен çак медосмотра тăма шăпах социаллă страховани фончĕ укçа куçарса парать. Кăçал, сăмахран, кашни çын валли 620-шер тенкĕ уйăрнă. Апла пулсан сывлăха тĕрĕслеттерсех тăмалла.

Н. НИКОЛАЕВА.

Обществăлла организацисенче

Çу илемĕпе киленетпĕр

Ытла та илемлĕ-çке çу кунĕсем. Пĕтĕм тавралăх тĕрлĕ тĕслĕ чечек-курăкпа ешерет. Хĕвел пайăркисем ăшшăн çупăрлаççĕ, пурне те çĕнĕ вăй-хăват параççĕ.

Ялти çынсен çу илемĕпе киленме те, кану пирки шутлама та вăхăчĕ çук. Халĕ акă утă ĕçĕ вĕçленчĕ, çум курăкран та вăхăтлăх «тасалтăмăр». Çавăнпа та Муркашри куç курманнисен обществин активлă çыннисем çут çанталăкпа киленме шутларĕç.

Икĕ районти ВОС-ăн чи активлă членĕсем утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче Муркаша пуçтарăнчĕç, Муркаш урамĕсен илемĕпе киленчĕç. Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн специалисчĕсем район историйĕпе паллаштарчĕç. Асăнмалăх сăн ӳкерчĕк те турăмăр.

Малалла вара районти чи таса та илемлĕ вырăна, Каршлăха çитрĕмĕр. Хăнасене Александр Невский мăнастирне кăтартма илсе кайрăмăр. Таса шывра чӳхенсе чунĕсене тасатрĕç, чир-чĕре хирĕç кĕрешме çĕнĕ вăй-хăват илчĕç куç курман инвалидсем.

Муркашпа Элĕк районĕсенче куç курман инвалидсен шучĕ çулсеренех ӳссе пырать. Ватăсем, ВОС-ăн хисеплĕ членĕсем, çулталăк пуçланнăранпа пирĕнтен 12 çын уйрăлса кайрĕç. Шел пулин те, çын пурнăçĕ 80 çултан иртесшĕнех мар. Сывлăхĕ çулсем иртнĕ çемĕн çирĕпленсе пымасть-çке. Тĕрлĕ чирчĕре пула ытларах çулланнă çынсем суккăрланаççĕ, çамрăк арçынсем ĕçре сусăрланнă тĕслĕхсем те сахал мар. Юлашки çулсенче тата ачасем те тĕрлĕ сăлтавсене пула япăх курма пуçларĕç е тата суккăр çураласçĕ.

Суккăр пуласси вăл – чи пысăк хуйхă. Çывăх çын е паллакан куçĕсене суранлатрĕ пулсан, васкарах куç тухтăрĕ патне кайма сĕнес пулать. Нумай чухне куç курманни организмра ытти чирсем аталаннăран та пулать.

Муркашри тĕп тата Мăн Сĕнтĕр больницисенче ăста та ырă кăмăллă куç тухтăрĕсем вăй хураççĕ. Лина Павловна Огурцовапа Галина Васильевна Николаева офтальмологсем кунсерен темиçе теçетке çыннăнне куçĕсене тĕрĕслесе, сиплесе тăраççĕ. Çак кабинетсенчи медицина сестрисем те нумай çул ĕçлеççĕ, таратат та ăста специалистсем, яланах ăшшăн кĕтсе илеççĕ, ырă сĕнӳсем параççĕ.

Шел пулин те, Элĕкри тĕп больницăра юлашки çулсенче куç тухтăрĕ эрнере икĕ кун çеç ĕçлетчĕ. Халĕ вара пачах пулмасси çинчен сас-хура тухнă. Епле пулĕха вара малашне? Элĕкре 80 çынна яхăн ВОС членĕсем, 2-3 группа инваличĕсем 30 çынна яхăн. Кашни çынах тĕп хулана е Çĕмĕрлене çитеймест. Çавăнпа та çак ыйтăва чирлисем майлă татса парсан питĕ аван пулмалла.

Кашни уйăхрах пуçтарăнатпăр эпир. Тухса тăракан ыйтусене çийĕнчех татса пама тăрăшатпăр. Иртнĕ çул Муркашри куç курманнисен вырăнти организацийĕ инвалидсене валли ИПР (инвалидăн реабилитаци программине) туса хатĕрлессипе нумай тăрăшрĕ. 50 ытла куç курман инвалид çак программăсене тума комиссисем витĕр тухрĕ. Социаллă страховани фончĕ пулăшнипе куç курман инвалидсем тифломагнитофонсем, пысăклатса вуламалли электронлă видеоувеличительсем, калаçакан тонометрсем, термометрсем, шурă туясем илетпĕр. Кусем кашни кун кирлĕ япаласем.

Ватă çынсем, суккăр çынсем патшалăх енчен пулăшу, хӳтлĕх илсен, савăнăç куççульне тытса чараймаççĕ. Çак хӳтлĕхе вĕсем яланах туйса тăччăр, мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра сывă çынна та пурăнма çăмăл мар. Укçа-тенкĕрен ытла чун ăшши кирлĕ. Сусăр çынна вăхăтра ăнланса пулăшу сĕнме пĕлесчĕ пирĕн.

Пурне те ырă сунса
Елена НИКИТИНА, Муркашри куç курманнисен вырăнти организацийĕн секретарĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070505:154, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:070505, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1836 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:070801:121, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Калайкасы, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:070801, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1490 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды:

- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:031001:0213, местоположение:участок находится примерно в 200 м по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, выселок Васильевка, ул. Прибрежная, д. 5, для складирования нерудных строительных материалов, площадью 13170 кв. м.;

- категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:031001:0214, местоположение:участок находится примерно в 600 м по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, выселок Васильевка, ул. Прибрежная, д. 5, для складирования нерудных строительных материалов, площадью 4950 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:110101:120, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Тереси, ул. Новая, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270202:48, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:270202, для сельскохозяйственного производства, площадью 7896 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Участник долевой собственности Калашников Валерий Леонидович, 16.03.1970 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, с. Оточево, ул. Победы, д. 37, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Сятракасинское, на территории землепользования СХПК им. К. Иванова, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:230701 площадью 4,32 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Сятракасинского сельского поселения.

2. Калашникову Валерию Леонидовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, с. Оточево, ул. Победы, д. 37.

Участник долевой собственности Петров Юрий Георгиевич, 08.02.1947 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 26, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Сятракасинское, на территории землепользования СХПК им. К. Иванова, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:230701 площадью 1,08 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Сятракасинского сельского поселения.

2. Петрову Юрию Георгиевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 26.

Продаю морозильную витрину б/у за 1 тыс. руб. Тел.: 62-1-35.

10 августа с 9-00 до 18-00 часов в ДК с. Большой Сундырь состоится распродажа летней обуви. Любая пара – 250 рублей. В продаже – комплекты постельного белья.

Утă сутатăп: е çулмалли, е çулни, е преслани. Тел.: 8-903-065-00-14.

Инд. проекты для стр-ва дома, офиса, производств. зданий. Тел.: 62-6-03, 8-903-345-75-76. Лиц. К.078133. 1-3.

ООО «Моргаушрайбыт» (Дом быта) оказывает населению следующие услуги: услуги парикмахерской, ремонт и пошив одежды на заказ, ремонт обуви. Набираем швей с желанием работать и зарабатывать. Работаем с 8-00 до 18-00 часов (воскресенье – выходной). Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Контактные тел.: 62-5-44, 62-8-56.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-5.

ВНИМАНИЕ – АКЦИЯ!
Только до 31 августа 2009 года в честь 50-летнего юбилея и Дня строителя ЗАО «МСО «Моргаушская» проводит расширенную продажу квартир по выгодным ценам. Обращаться по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 «а» (здание редакции, 2-ой этаж. Контактные телефоны: 69-7-23; 671-999 (сот). 2-2.

Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.
Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 12-40.

Администрация Моргаушского района выражает соболезнование родным и близким по поводу кончины
ДАНИЛОВА
Порфирия Даниловича,
ветерана Великой Отечественной войны, жителя выселок Первое Мая.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 04.08.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3765.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.